# ШĂНКĂРАВ

## *Шкула, ачасем, шкула!*





2024-мĕш çулхи
авăн уйăхĕ
28 №-лĕ хаçат

## ШКУЛ ХЫПАРĔСЕМ


Пĕлӳ кунĕ тĕлне ……………………………………2-3 с.
«Çуллахи илемлĕ куншăн тунсăхлатăп»
сочинени……………………………………….…...4 с.
Ваттисен сăмахĕсем…………………………...…….5-6 с.


***********************************

Шкул хаçачĕ 2022-мĕш çулхи
нарăс уйăхĕнчен тухса тăрать


Йĕркелӳçĕсем:
Ермошкина Раиса Николаевна
Сютова Кристина Васильевна





# ШĂНКĂРАВ

Салам, салам, юратнă шкул!
Кунта эс, тус, пит тимлĕ пул.
Калав вула, пример шутла,
Выля, ташла тата юрла.
Паян эпир каллех шкулта.
Паян эпир каллех класра!
Пире учитель саламлать.
Çитĕнӳсем, вăй-хал сунать!





*Пĕлӳрен хаклă пурлăх çук.*
*Вĕреннине çĕклесе çӳремелле мар.*
*Ăслăлăх çăлтăрсем патне çитерет.*
*Ăсталăх –пĕлӳре, пĕлӳ – вĕренӳре,*
*вĕренӳ – пурнăçра!*

**Пēлӳ кунē тēлне**

ШКУЛ

Эсē, шкул ачи, çакна асра тыт:
Вēренни  ялан аван пуянтан.
Кам нумай пēлет – вāл çухалас çук,
Пēлӳ илесси  пуçланать шкултан.

Шкул вāл – тāван кил, парать пире пил
Пурнāç таппипе пēр тикēс утма.
Ан ӳркен, вēрен, тарāн пēлӳ ил,
Çак çут тēнчере тāрāш çын пулма.

Шкул вāл – ачалāх, пурнāç - хāналāх,
Пурāнан пурнāç - пурте вāхāтлāх.
Кашни минута пēлсе усā кур,
Тāван çēршыва усāллā çын пул.

Шкул вāл - çемье: пуçтарать пēр çēре
Вēрентекенпе вēренекене
Āс-тāн туптама пēлӳ керменне
Васкатса ялан урока ирех.

Шкул вāл – савāнāç, пурнāç никēсē,
Çамрāк  ачалāх сāпкипе пēр тан,
Нихāçан манāçмасть шкул сукмакē,
Хāлхаран та тухмасть йēс шāнкāрав.













**Çуллахи илемлĕ вăхăтшăн тунсăхлатăп**

Çулталăкăн кашни вăхăчĕ хăйне евĕрлĕ илемлĕ. Эпĕ вара çуллана юрататăп.

Каникула кайиччен юлташсемпе «Санар» кану лагерьне çӳрерĕмĕр. Еплерех савăнăçлă та усăллă ирттертĕмĕр вăхăта!

Кашни кун сывлăха çирĕплетмелли зарядка, тĕрлĕ хускану, чупу, кĕрешӳ…

Тутлă та техĕмлĕ апат шăрши…

Спорт ăмăртăвĕсем, тупăшса канат туртни, винтовкăран пеме вĕренни халĕ те асăмрах.

Çуллахи каникулта эпĕ чунпа канатăп. Çемьепе çырлана, кăмпана, кĕтĕве çӳретĕп. Шывра ишсе савăнатăп, атте-аннене пулăшатăп. Çут çанталăкпа киленсе савăнатăп! Вăй пухатăп.

Çулла! Хăвăртах кил! Кĕтетĕп!

Волкова Варвара, 5 класра вĕренекен



# Ваттисен сăмахĕсем мĕн калаççĕ?

- Çăкăр тутине ĕçлекен пĕлет.
- Аллуна çумасăр çăкăр ан тыт.
- Çăкăр çиес тесен кăмака çинче ан лар.
- Çăкăртан аслă пулма хушман.
- Кашни тыр пĕрчинче тар тумламĕ пур.
- Сĕтел çинче çăкăр пулмасан килте савăнăç та çук.

# Çăкăр.

Çăкăртан аслă ан пул.
Çăкăр – халăх пуянлăхĕ.
Çăкăр вăл - çĕр-аннемĕр парни.
Çăкăр вăл – чи хакли.
Çăкăр вăл – пурнăç.
Çăкăрта пирĕн вăй - хал.
Çăкăр - çĕртен, вăй - çăкăртан.
Çăкăр – чи ырри. Çав тери усал тĕнчере те, çав тери усал çын та çăкăра ырăпа çес асăнать.
Çăкăр тутине ĕçлекен пĕлет.
Çăкăртан аслă пулаймăн.
Çăкăр-тăвар хире-хирĕç.
Çăкăр хырăм хыççăн çӳремест.
Килекен çынна çăкăр лартма хушнă.
Выççан çăкăр тутлă ялан, пыл та йӳçĕ тăрансан.
Тăснă çăкăртан пăрăнмаççĕ.
Çăкăр – тăвар хире – хирĕç.
Çăкăр пĕрчĕрен пулать.





# РЕФЛЕКСИ
# « ЭСĔ ПАЯН МĔНЛЕ КĂМĂЛЛĂ?»

| | |
|---|---|
| хĕрлĕ сарă | савăнăçлă, хаваслă<br>(радостное, восторженное настроение) |
| сарă | кăмăллă, лăпкă<br>(приятное, спокойное настроение) |
| симĕс | активлă, хастар<br>(активное состояние) |
| кăвак | кичем, ывăнчăк<br>(грустное настроение, усталое состояние) |